Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

6 (7751) № * Шăмат кун, 2010 çулхи январĕн (кăрлач) 30-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Республика конкурсĕнче

## Муркаш библиотеки – республикăра чи лайăххи



*Муркашри ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотека пофесси ăсталăхĕн республикăри конкурсĕсене çулленех активлă хутшăнать. Кăçал та кунта вăй хуракансем «Чи лайăх библиотека – право информацийĕн центрĕ» конкурса хутшăнмасăр юлма пултараймарĕç. Виçĕ тур хыççăн «Гарант» справкăпа право системине пĕлессин сферинче чи лайăх библиотека» номинацире Татьяна Александровна Волкова пĕрремĕш, «КонсультантПлюс» справкăпа право системине пĕлессин сферинче чи лайăх библиотека» номинацире Ирина Алексеевна Николаева 2-мĕш вырăн йышăнни паллă пулчĕ.*

*Çĕнтерӳçĕсене ЧР Наци библиотекинче февралĕн 17-мĕшĕнче чыслаççĕ. Малашне те вĕсене хăйсен ĕçĕнче ăнăçусем сунатпăр.*

**Т. КОРОЛЬКОВА,**
**Муркашри ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотека директорĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: çĕнтерӳçĕ-библиотекарьсем.**

В.В. Путин Чăваш Енре пулнă май

## Республика аталанăвĕн актуаллă ыйтăвĕсене сӳтсе явнă

**Кăçалхи январĕн 25-мĕшĕнче Чăваш Республикинче ĕçлĕ визитпа Раççей Федерацийĕн Правительствин Председателĕ Владимир Путин пулнă. Малтанах вăл Шупашкарта Правительство Çуртĕнче республика Президенчĕпе Николай Федоровпа тĕл пулнă. Калаçу вăхăтĕнче Чăваш Енĕн экономикăпа социаллă аталанăвĕн актуаллă ыйтăвĕсене сӳтсе явнă.**

Уйрăммăн илсен çавна палăртнă. Иртнĕ çул уйрăм çынсен тупăшĕнчен илекен налук калăпăшĕ унччен палăртнинчен 350 миллион тенкĕ ытларах пулнă. Лайăх палăрăмсенчен пĕри – республикăра агропромышленность комплексĕ динамикăллă аталанса пыни. «Эпир пĕтĕмĕшле продукци илессин ӳсĕмĕ 3,5 процент пуласса палăртнăччĕ, вăл вара 5,2 процентпа танлашрĕ. Ĕç тухăçлăхĕ унччен палăртнă пек 17 процент вырăнне 26 процент ӳсрĕ. Ĕç укçи 22 процент хăпарнă. Ку вăл питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ»,– палăртнă Президент. Килти хушма хуçалăха аталантарма 45 пин çын пĕтĕмпе 7 миллиард та 300 миллион тенкĕ çăмăллатнă кредит илнĕ. Çакă вăл пĕтĕмпех Чăваш Енре ял территорийĕсене комплекслă аталантарса пынипе май килнĕ. Кусем вĕсем газ кĕртни те, çулсем туни те, çемье врачĕн офисĕсемпе тĕслĕх библиотекăсем, хальхи спорт керменĕсем уçни те.

Владимир Путин уйрăмах Чăваш Енре пурăнмалли çурт-йĕр сферинче пурнăçа кĕртсе пыракан проектсемпе интересленнĕ. Аса илтеретпĕр: Раççей Федерацийĕн Правительствин Председателĕн йышăнăвĕпе республика Шупашкар хулинчи Богдан Хмельницкий урамĕн территорийĕнче комплекслă строительство ĕçĕсем туса ирттерес тата инженери сечĕсем тăвас тĕлĕшпе тăратнă регионти инвестици проекчĕн паспортне çирĕплетнĕ. Халĕ проекта пурнăçа кĕртме Раççей Федерацийĕн Инвестици фончĕ патшалăх пулăшăвĕ парĕ. Çав тĕллевпе уйăрса паракан укçа-тенкĕ калăпăшĕ 500 миллион тенкĕпе танлашать. Кунсăр пуçне пурăнмалли çурт-йĕр строительствине аталантарма пулăшакан Фонд укçа-тенкĕ уйăрнипе республика тĕп хулинче çĕр участокĕнче ĕççсем пуçăннă. Кунта 100 пин тăваткал метр пурăнмалли çурт-йĕр хута яма пăхнă. «Çитменнине ку вăл хăтлă çурт-йĕр тата питĕ килĕшӳллĕ хакпа пулĕ»,– палăртнă республика пуçлăхĕ.

Чăваш Ен Президенчĕ Раççей Правительствин Председателĕпе тĕл пулнă чух хускатнă актуаллă ыйтусенчен пĕри – республикăра тракторсем тăвассине аталантарасси. Унччен палăртнăччĕ ĕнтĕ, Внешэкономбанкăн Владимир Путин ертсе пыракан Сăнав канашĕ «Тракторные заводы» Концерна çичĕ çуллăха 15 миллиард тенкĕ тĕллевлĕ кредит уйăрса парассине ырланă. «Патшалăх пулăшăвĕ пире кăçал Раççей рынокĕнче концерн продукцине ыйтассине икĕ хут ӳстерме май парĕ, кунсăр пуçне питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ самант – экспорт виçине те икĕ хут ӳстерме май килĕ»,– тенĕ Николай Федоров тата республикăри трактор тăвакансен ячĕпе Раççей Правительствин пуçлăхне «кризис вăхăтĕнче отечествăлла трактор машиностроенине питĕ пысăк пулăшу панишĕн» тав сăмахĕ каланă май.

**Хамăр инф.**

Диспансеризаци ыйтăвĕсемпе

## Ветерансен сывлăхне мала хунăран

***Çулсем кайнă çемĕн çеç эпир сывлăх кашни çыншăнах чи хакли пулнине ытларах та ытларах туйма пуçлатпăр. Кашниншĕнех – ача-и вăл е 70 урлă каçнă ватă çын – хăйĕн сывлăхне упрасси, тĕрĕслесе тăрасси малти вырăнта пулмалла.***

Кăçал акă январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа апрель уйăхĕ вĕçлениччченех ЧР Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин 2009 çулхи октябрĕн 19-мĕшĕнчи 1165 № хушăвĕпе килĕшӳллĕн пирĕн районта та Тăван çĕршывăн Аслă вăрçă инваличĕсемпе ветеранĕсене, тăлăх арăмсене тата «Блокадăллă Ленинградра пурăнакана» паллăна тивĕçнисене тарăн медицина тĕрĕслевĕ ирттерме палăртнă. Тепĕр майлă каласан, районта диспансерлă тĕрĕслев ирттеретпĕр. Ăна çӳлерех асăннă çынсен чирĕсене вăхăтра тупса палăртас, вĕсене асăрхаттарас, кирлĕ медицина пулăшăвĕ парас, чирсене чакарас, активлă пурнăçăн тăршшĕне тăсас тĕллевпе йĕркеленĕ.

Гражданен çак категорийĕсене диспансеризаци ирттересси сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕсенче, вăл шутра социаллă пулăшупа тивĕçтерекен стационарлă учрежденисенче те пулса пырать.

Çак тапхăра специалистсен ятарлă ушкăнĕсене йĕркелессине те пăхса хунă. Мĕншĕн тесен вырăнпа выртакан ватă çынсем те çук мар, вăраххăн çеç вырăнтан вырăна куçма пултараканнисем те. Вĕсем патне специалистсен ушкăнĕсем тухса çӳреççĕ.

Диспансеризаци тытăмне кĕртнĕ тĕрĕслевсене пысăк квалификациллĕ специалистсем туса пыраççĕ, кирлĕ йышши медицина оборудованийĕ те çителĕклĕ. Каласа хăвармалла, çак тĕрĕслев пĕтĕмпех патшалăх программипе килĕшӳллĕн тӳлевсĕр иртет, çынсен тăкакланма тивмĕ.

Тĕрлĕ лаборатори тишкерĕвĕсене ирттеретпĕр, вăл шутра онкомаркер тĕрĕслевĕ те пур. Шăпах çак тĕрĕслев шыçă чирĕсем пуçланма пултарассине малтанхи тапхăртах тупса палăртма май парать те. Чи малтанах анлă сарăлнă чĕре чирĕсене, сахăр диабетне, рак тата ытти чирсене тупса палăртмалли меслетсемпе усă кураççĕ. Тата ытти чылай тĕрĕслев те диспансеризаци шутне кĕрет. Çав вăхăтрах специалистсем те кирлĕ сĕнӳ-канашпа пулăшĕç.

Диспансеризаци пĕтĕмлетĕвĕсем çынна реабилитаци вăхăчĕ кирлине палăртсан, çак ĕçе пурнăçлаççĕ, тепĕр ултă уйăхран чирлĕ çынна тепĕр хут врачсем пăхаççĕ.

**А. ЧИНОВНИКОВА,**
**«Муркаш районĕн тĕп больници» муниципаллă сывату учрежденийĕн поликлиника ертӳçи.**

Вĕренекен хĕрарăмсене пĕлме

## Пособисене вĕрентӳ учрежденийĕ тӳлемест

Иртнĕ çулхи декабрĕн 31-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн Правительстви патшалăх пособийĕсен уйрăм тĕсĕсене тӳлесе тăрассин финанс йĕрки çинчен калакан 1162 № постановлени йышăнчĕ. Унпа килĕшӳллĕн пуçламăш, вăтам профессиллĕ тата аслă шкулсенче, аслă шкул хыççăнхи профессиллĕ пĕлӳ паракан урежденисенче куçăмлă майпа вĕренекен хĕрарăмсене ача çуратнăшăн тата ăна пăхнăшăн уйăхсерен паракан пособисене кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса социаллă хӳтлĕх паракан органсем тӳлесе пыма тивĕç.

Вĕренекен хĕрарăмсене ку таранччен çак пособисене тӳлесе тăрассине вĕрентӳ ӳчрежденийĕсенче йĕркеленĕ пулнă. Çавăнпа та халĕ вĕренекен хĕрарăмсен çак ыйтупа районти социаллă хӳтлĕх пайне пымалла.

**Н. ПЕТРОВА,**
**ЧР Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ.**

Йышăну

## Савăнăçлă пуху пулать

Район администрацийĕн пуçлăхĕ 2010 çулхи январĕн 26-мĕшĕнче «Районăн 2009 çулхи экономикăпа социаллă аталанăвĕн итогĕсене пĕтĕмлетессине халалласа савăнăçлă пуху ирттересси çинчен» 34 № йышăну тунă. Районти ĕç коллективĕсен представителĕсемпе ентешлĕх членĕсен савăнăçлă пухăвĕ 2010 çулхи февралĕн 20-мĕшĕнче Сосновкăри вĕрентӳпе культура центрĕнче Ваçкассинче иртет.

Мероприятисене хатĕрленсе ирттерме йĕркелӳ комитечĕ туса хунă. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ертсе пырать.

Районăн 2009 çулхи экономикăпа социаллă аталанăвĕн итогĕсене пĕтĕмлетнĕ май туса ирттермелли мероприятисен планне çирĕплетнĕ.

Гражданесене йышăнаççĕ

### «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин Муркаш районĕнчи уйрăмĕн обществăлла йышăну пӳлĕмĕнче гражданесене 2010 çулхи февраль уйăхĕнче хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнмалли график

| Хăш кун | Йышăнмалли вăхăт | Кам йышăнать |
| --- | --- | --- |
| Февралĕн 2-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Юрий Александрович ИВАНОВ,** «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин вырăнти уйрăмĕн политканашĕн секретарĕ, район администрацийĕн пуçлăхĕ |
| Февралĕн 5-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Игорь Васильевич НИКОЛАЕВ,** политканаш членĕ, депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх ертӳçи |
| Февралĕн 9-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Владислав Григорьевич ДАНИЛОВ,** политканаш членĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ |
| Февралĕн 12-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Лилия Юрьевна ТАРАСОВА,** секретарь çумĕ, район администрацийĕн йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ |
| Февралĕн 16-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Станислав Степанович ИВАНОВ,** ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕн В.А. Морозовăн пулăшаканĕ |
| Февралĕн 19-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Валерий Иванович ВЯЗОВ,** политканаш членĕ, депутатсен районти Пухăвĕн культурăпа социаллă ĕç-хĕл, сывлăха сыхлас, вĕрентӳ ĕçĕ, физкультурăпа спорт енĕпе ĕçлекен яланхи комисси председателĕ, «Росгосстрах-Поволжье» страховани компанийĕн Муркашри уйрăмĕн пуçлăхĕ |
| Февралĕн 26-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Валентина Николаевна ЛЮБИМОВА,** политканаш членĕ, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ, Ярапайкассинчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕн врачĕ |

Саламлатпăр

Уйкас Хачăк ялĕнче пурăнакан **Алина Федоровнапа Николай Ильич БЫЧКОВСЕНЕ** 55 тата 60 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Хаклă çыннăмăрсене сурпан пек вăрăм ĕмĕр, юман пек çирĕп сывлăх, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хăват, çут тĕнче илемĕпе киленсе пурăнма çирĕп сывлăх, вăй-хал, вĕççĕр-хĕрсĕр телей, канлĕ ватлăх сунатпăр.



Сирĕн çулсем иртеççĕ сисĕнми,
Кирлех-ши уншăн кулянма?
Вăй-халăр пултăр иксĕлми.
Телейпе ырлăх курни яланах тулли пултăр, ăшпиллĕх хуçалантăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕ, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕ, хăтипе тăхлачи, çывăх тăванĕсем.**

Чи юратнă та хаклă çыннăмăра – Турхан ялĕнче пурăнакан **Анна Кирилловна МАКСИМОВАНА** 70 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн, пире юратса çитĕнтерсе тĕрĕс çул çине тăратнăшăн.

Хаклăран та хаклă аннемĕр! Эс пурришĕн савăнатпăр, хамăра çав тери телейлĕ туятпăр, тайма пуç сана пуриншĕн те. Сывлăху сан çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм та телейлĕ килтĕр, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан, кил-çурту тăван-пĕтентен ан татăлтăр.

**Салампа: ачисем, кинĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**